рецензи (1985, 10 №, авторӗ Л. Степанов) тӳсме ҫук шӑлсӑр, «пылак». Сӗнӳ тавраш̆е е юлташла асӑрхаттарса каланӑ ҫур сӑмах та пулин курасчӗ ҫак рецензире иҫмасса. Мухтамалли вара тем чухлех тупӑннӑ. Ҫама усӑ парӗҫ-ши ӗнтӗ ҫакнашкал «мухтав юррисем»?

Ҫакнашкал рецензисене вулатӑн та ирӗксӗрех ҫапла шутлатӑн: пичетлекенӗсем вӗсенчен мар иккен хӑрушлӑх кӗтеҫҫӗ, ҫивӗчреххисенчен, шӑллӑраххисенчен, имшер те хевтесӗр япаласене куҫран каласа тиркекенсенчен сехре хӑппи кӗтме пулать-мӗн.

...Кӗрхи кунсенче, тӳпере инҫе ҫул вӗҫевне тухнӑ ҫунатлӑ тусӑмӑрсене курсан (ӑшра та пулин), ыр сунса: «Қайри мала, хуркайӑксем!» — тетпӗр эпир. Ҫапла каласан, ӑмрипе сывлӑша ҫурса малта вӗҫекенсене вӑй килет тейӗн. Ылмашӑнса пырсан, кӑшт канса илнӗ пек пулаҫҫӗ вӗсем. Хамӑр литературӑн тӗрлӗ жанрӗсен картине ылмашӑнса, пӗрне-пӗри пулӑшса пыракан хуркайӑксен ушкӑнӗ пек курас килет манӑн. Шанатӑп: критика та йывӑрлӑхсене сирсе малти вырӑна тухмаллах.

Статья вӗҫне пӑнчӑ лартма хатӗрленнӗ май ӑшӑмра ҫапла калатӑп: «Қайри мала, хуркайӑксем...»

*1986*

## ТӐВАН ХАЛӐХА ЮРАТСА

**(Хветӗр Уяр 70 ҫул тултарнӑ май)**

Чӑвашсен хальхи вӑхӑтри паллӑ писателӗн Хветӗр Уярӑн сасси тӑван литературӑра вӑтӑрмӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче илтӗнме тытӑнать. Аслӑ ҫул пуҫламӑшне писатель хӑй акӑ епле аса илет: «Капкӑн» журналта ик-виҫӗ калав пекки пичетлесе кӑларнӑ хыҫҫӑн, 1931 ҫулхи ҫулла, эпӗ «писателе кӗме» Шупашкара килтӗм. Писателе кӗресси те, тухасси те пулмарӗ манӑн, унта кӗме хӑтланса та пӗр утӑм тумарӑм, Шупашкарти Садвинтрест совхозне ут пӑхма кӗтӗм».

Тин ҫеҫ ҫырма пикенекен авторӑн пирвайхи калавӗсемпе фельетонӗсем паллӑ сатирик Иван Мучи кӑларса тӑнӑ «Капкӑн» журналта кун ҫути кураҫҫӗ. Ҫакӑн умӗн кӑшт ҫеҫ маларах вӑл Самар хулинчи икӗ сыпӑклӑ текен чӑваш шкулӗнче вӗренет-ха. Ҫураласса вара пулас писатель 1914 ҫулхи апрелӗн 19-мӗшӗнче халӗ Куйбышев облаҫне кӗрекен

Исаклă районĕнчи Сухари-Матак ялĕнче хресчен килйышĕнче çуралнă. Унăн авалхи несĕлĕсем кунтан, Чăваш çĕршывĕнчен, куçса кайнă пулнă.

Çапла вара, вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче Хветĕр Уяр тĕп чăваш çĕрне таврăнать. Хăй калашле, «писателе тухиччен» нумай тар юхтарма тивет ун кунта, тĕрлĕ ĕçре ĕçлет вăл: кăмака та купалать, ут кĕтĕвĕ те кĕтет. Канăçсăр чунлă çамрăка çул йыхравĕ илĕртет, часах вăл Инçет Хĕвелтухăçне тухса каять. 1933 çулта Хабаровскри педагогика техникумĕнче вĕренме пуçлать, каярахпа Благовещенскри педагогика институтне вĕренме кĕрет. Хăйшĕн пачах çĕнĕ тĕнче уçать яш каччă Инçет Хĕвелтухăçĕнче. Хăнăхиччен йăлтах урăхла кунта: çутçанталăкĕ те, çыннисем те, чĕрчунĕсем те. Анчах та пĕр хăнăхсан, пурте чуна çывăх иккен, илĕртӳллĕ, асамлă. Малтанхи вăхăтра «тĕнче хĕрри» пек туйăнакан çĕршывпа ĕмĕрлĕхех туслашать писатель. Çак çĕрсене халалласа темиçе кĕнеке те çырать каярахпа. Кунтах чăвашран тухнă чаплă художникпе паллашса туслашать.

1936 çулта Чăвашъене каялла куçса килсен, Хветĕр Уяр Шупашкарти педагогика институтне вĕренме кĕрет, вăтам шкулта ĕçлет, каярахпа вăл — Чăваш радиокомитет сотрудникĕ. Çакăнта ĕçленĕ вăхăтра Уяр «Колчак» поэма авторĕпе Илле Тăхтипе паллашать. Кун çинчен писатель каярахпа «Тăхтипе паллашни» очеркĕнче асра юлмалла çырса кăтартать. Хисепе хурса, ун чăннипех те пысăк талантне картса аса илет Уяр пултарулăх ĕçĕнчи аслă юлташне. Çамрăк çын чĕринче Тăхти тарăн та пархатарлă йĕр хăварнă. Уяр Тăхтирен çыру ăсталăхне нумай вĕреннĕ. Ăсталăха Тăхтирен вĕренни Уяр çырнисенче лайăх палăрать.

1941 çулта Хветĕр Уяр çырнă калавсен пуçламăш пуххи пичетленет. Çав çулах вăл вăрçа тухса каять. Тăван çĕршыва хӳтĕленĕшĕн вăл III-мĕш степеньлĕ Мухтав орденне тата медальсене тивĕçлĕ пулать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Хветĕр Уяр пысăк калăплă произведенисем çырма тытăнать. Пĕрремĕш романĕн малтанхи варианчĕ «Шурча таврашĕнче» ятпа уйрăм кĕнекен 1952 çулта пичетленет. Каярахпа ăна автор, çĕнетсе, «Таната» ятпа кăларчĕ. Халĕ Уяр — нумай кĕнеке авторĕ ĕнтĕ. Çавах та писатель таланчĕн пĕтĕм сулмакĕпе хăватне «Таната» роман лайăхрах кăтартса парĕ. Кĕнекери тĕп ĕç-пулăмсем иртнĕ ĕмĕр варринче чăваш тăрăхĕнче пулса иртнĕ Шурча вăрçипе çыхăннă. Тĕттĕм, хавшаса çитнĕ чăваш ялĕ, ĕмĕрсем тăршшĕпех пусмăрта асапланнăскер, ерипен

куçне уçма пикенет. Вуншар çул хушши капланнă чăваш хресченĕн çилли. Чухăнăн çичĕ тирне сÿнĕ Яка Иллесемпе Салакайăк пупсем, Шахрун йышши тара кĕрĕшсе пуç касакансемпе Ивуксем — унăн ĕмĕрхи тăшманĕсем. Социалла хирĕçÿсем хĕрсе пынине, класс кĕрешĕвĕ амаланса, хĕçпăшаллă çапăçăва куçса кайнине автор чăнлăха пăсмасăр ÿкерсе кăтартнă. Чăваш халăхĕ нихçан та чухăн пулман иккен патвар та хăюллă. Улăп пек яш-кĕрĕм тĕлĕшĕнчен. Салтакра чĕрĕк ĕмĕрне ирттернĕ Григорьев, чухăнсен шанчăкĕпе тĕрекĕ, кĕрнеклĕ те сăпай каччă Ухтиван, Касьян тимĕрçĕ хăйсен класс тăшманĕсене витĕр кураççĕ ĕнтĕ, кĕрешÿре çул кăтартса пыраççĕ. Хивре явнă автор роман сюжетне, сăнарĕсем вара ĕненмелле, чĕрĕ те кĕрнеклĕ.

«Таната» романа хамăр хутлăхра çеç мар, вырăссен паллă писателĕсем те, Мускав литературовечĕсем те тÿрех асăрхарĕç, пахаларĕç. Вĕсен йышĕнче — Георгий Ломидзе, Евгений Федоров, Валентин Оскоцкий т. ыт. те. Паллă прозаик Николай Евдокимов каланă тăрăх, роман пирĕн вăхăтри совет литературин чи паха тĕслĕхĕсемпе юнашар тăрать. «Роман геройĕсем хăйсене чăн чăвашла тыткаланине, чăвашла тĕнчетуйăмлă пулнине эпир тÿрех туйса илетпĕр»,— тет вăлах. Вырăс писательне Уярăн психологизмла ăсталăхĕпе тарăнлăхĕ тĕлĕнтернĕ. Кунашкал сумлă хака пирĕн прозаиксен кĕнекисем час-часах тивĕçеймеççĕ-ха.

Автор чылай çул хушши ĕнтĕ романăн иккĕмĕш кĕнекипе ĕçлерĕ. Чăвашла вулакансем унăн уйрăм сыпăкĕсемпе паллашрĕç ĕнтĕ. Прозаик çак пысăк ĕçе ăнăçлă вĕçлессе шанас килет.

50—60-мĕш çулсенче Хветĕр Уяр сахал мар повесть тата калавпа очерк çырчĕ. Ялпа хула пурнăçĕ, творчество интеллигенцийĕн ĕçĕ-хĕлĕ е çамрăксене воспитани парас ыйтусем шухăшлаттараççĕ писателе. Кашни çĕнĕ хайлавĕнчех вăл çак çивĕч ыйтусене хăй пултарнă пек, çĕнĕлле çĕклеме тăрăшать. Яланах ăна пурнăçăн шалти, çиелтен курăнса тăман енĕсене кăтартса парасси илĕртет. Этем чун-кăмăлĕн тĕнчине кĕме шутсăр йывăр. «Шахтер пек тăрмашать вăл, кирлĕ мар сăмахсене, суя эрешсене айккалла ывăтать... Пĕтĕм вăя хурса чакалансан çеç тахçан пĕрре ылтăн пĕрчисем тухакан сие чавса çитетĕн». Çапла калать Уярăн пĕр геройĕ, писателĕн йывăр та тертлĕ ĕçне палăртса. Танлаштарăвĕ вара чăнахах та витĕмлĕ, сăнарлă. Сăмах май каласан, писатель ĕç-хĕлĕ патне чылай хайлавĕнче Уяр çĕнĕрен те çĕнĕрен таврăнать. Писатель сăнарĕ уйрă-

мах ун повеçĕсенче час-час тĕл пулать. Акă, сăмахран, «Пиччĕшĕне шăллĕ» повеçе илер. Ун тĕп геройĕ Александр Яковлевич, темиçе кĕнекс авторĕ, кăштах ял сывлăшĕпе сывласа кăмăл-туйăмĕсене çĕнетем тесе, тăван ене таврăнать. Тăван пиччĕшĕпе инкĕшĕ патĕнче хăнара темиçе талăк пурăнать вăл. Тӳрех калас пулать, автор паянхи ялăн социалла пурнăçне, культурăлла сăн-сăпатне пĕтĕм анлăшпех илсе сăнлас çулпа каймасть. Уйрăм çынсен психологине, вĕсен шухăш-туйăмне тарăнрах уçса парас тĕллев лартнă пулас вăл хăй умне. Çакнашкал сăнав валли килти пурнăç, йăла-йĕрке кулленлĕхĕ уйрăмах меллĕ. Акă Александр Яковлевичăн пиччĕшне Уçăпах илер. Мĕн кĕçĕнрен пĕрле выляса, йывăр кунсене çума-çумăн тӳссе ирттернĕ пулин те, шăллĕ пиччĕшне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса çитейменха. Чун-кăмăлĕ темле хупăнчăк та чăлханчăкрах унăн. Яш чухне турра ĕненнĕ Уçăп. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха чи кайран çырăннă. Авланма та ытти сем пек мар, çынна култарсарах авланнă. Халь акă «колхозра ĕçлеме чирлĕ вăл, хăйшĕн çывăрмасăр ĕçлеме те хатĕр».

Уяр стилĕн тахçанах палăрнă вăйлă енĕеенчен пĕри вăл — этемĕн шалти, чун тĕпĕнчи туйăм хусканăвĕсене витĕмлĕ пайрăмсемпе (детальсемпе) яр-уççăн палăртас туртăм. Пĕр-икĕ йĕр сăнара чĕртсе тăрататъ е пурнăçри пулăмсене витĕртерех курма май паратъ. Акă темиçе тĕслĕх.

«Уçăп кушака нихçан та апат памасть-мĕн. Ун шухăшĕпе, кушак та, йытă та хăйсене хăйсем тăрантарма пĕлмелле».

«Вăхăт-вăхăт çеç куçĕ патĕнчи пĕчĕк тымар чăлт-чăлт сиксе илет» (Нина портретĕнчен).

«Лав умĕнчен туй çĕленĕ сĕтĕрнĕ хура кушак каçса кайрĕ» т. ыт. те. Уяр пултарулăхĕн çак енне асăннă чухне унăн çырас ăсталăхĕнче Л. Толстой, А. Чехов, И. Бунин витĕмĕ пуррине палăртсă хăвармалла.

Тĕлĕнст Александр Яковлевич пиччĕшĕнчен: мĕнле-ха вăл паян кунччен харпăрлăх психологийĕн каяшĕсенчен хăтăлаймасть? Кашни самантрах пурлăх пухма тăрăшать Уçăп. Пĕр аллă тĕп кĕреш юман касса, киле турттарса хурсан пăсмĕччĕ тесе хурать вăл шăллĕпе сăмахланă хушăра. Вара мĕн тăвăттăн вĕсемпе тесе ыйтсан, çăкăр ыйтмаççĕ вĕт тет. Умри пахчине те çур урама яхăн ярса илсе тытать.

«А, тен, пурнăç инстинкчĕ çавнашкал? — тесе шухăшласа пырать Александр.— Çын юлашки сывлăшĕ тухиччнех малаллине ĕмĕтленет. Чирли эп вилмелле тесе, ватти пурăнса çитрĕ тесе ĕçлеме пăрахсан е ĕçке ярăнсан, мĕн

пулса тухӗ? Пурнӑҫ чарӑнса ларӗ». Ҫакӑн йышши шалти монологсемпе ҫын чун-чӗрине, ӑшри туйӑмӗсене тарӑннӑн уҫҫа парать автор. Пӗр-пӗр персонажӑн илемлех мар енӗсене кӑтартнӑ чух та ытарлӑнрах е систерсе калама тӑрӑшать вӑл. Примитив мелӗсенчен, ытлашши тӳртӗн е ярлӑк ҫакса этеме хак парассинчен асӑрханать чӑн-чӑн ӑста.

Уҫӑпа илсен, унӑн ҫав пурнӑҫ инстинкчӗ текенни вактӗвек чеелӗхпе суя-ултавра курӑнать. Шупашкара таврӑнсан, Александр Яковлевич харӑсах темиҫе ҫыру илет. Колхоз председателӗ Басовпа вӑрман хуралҫи ҫырӑвӗсене вуласан, вӑл пиччӗшӗ ун ячӗпе, писатель ячӗпе хӳтӗленсе, илемсӗр ӗҫсем тума та вӑтанса тӑманнине пӗлет. Ҫак тепӗр хут тарӑн шухӑша ярать ӑна, пӑшӑрхантарать те.

«Виҫӗ кун, виҫӗ каҫ» повеҫре те темле пысӑк ӗҫ-пулӑмсемех курмастпӑр эпир. Кунта пӗтӗмпех Роман Петров писатель асилӗвӗсем, каласа панисем, курни-илтнисем. Калавҫӑ вӑтӑр ҫул ӗлӗкрех хӑйпе пӗрле институтра вӗреннӗ Якур патне ҫитсе курма шухӑш тытать. Лешӗ хӑй йыхравлать-ха ӑна. Мӗн тери хитре пулнӑ иккен вӑл, Якур, тахҫан яш чух! Талант тенӗ ун пирки пурте. Художник пулма ӗмӗтленнӗ ҫамрӑк. Тантӑшӗсем ӑна ӑмсаннӑ, хӗрсем, Якур куҫ хӗссен, ун хыҫҫӑн таҫта кайма та хатӗр пулнӑ. Анчах та кӗтмен ҫӗртен ун чухне Якур, пурне те тӗлӗнтерсе пӑрахса, ҫулланнӑ хӗрарӑма, Катерина Ивановнӑна, качча илнӗ. Тӗрӗссипе, ун патне киле кӗнӗ. Апла пулсан, темиҫе пӳлӗмлӗ хваттер те, ӗҫлемелли условисем те ҫителӗклех пулнӑ унӑн. Мӗнле-ши, ҫак вӑхӑт хушшинче пысӑк художник пулайнӑ-ши вӑл? Ҫак шухӑшсемпе персе ҫитет Петров яшлӑхри пӗлӗшӗ патне. Ҫук, пӗрре те шутламанччӗ вӑл хӑйӗн юлташне капла курӑп тесе. Юхӑннӑ-мӗн Якур, мӗскӗнленнӗ, хавшанӑ. Вӑтӑр ҫула яхӑн пурӑннӑ вӑл ҫумаҫумӑн ҫак мещенлсенсе кайнӑ, ултавлӑ та сӑхӑ чунлӑ хӗрарӑмпа! Акӑ мӗне пула пӗтернӗ вӑл талантне, лешӗ ӗмсе илнӗ ӑна пӗтӗмпех, эрешмен пек. Творчество валли чун ирӗклӗхӗпе ҫути кирлӗ. Ҫакӑ Якурӑн юлман, сӳннӗ. Анчах та тинех кама айӑплӑн? Чуна сутма, совеҫе ҫывратма юрамасть иккен. Пурнӑҫра йӗри-тавра ултав серепесем, асӑрханаймарӑн-тӑк — самантрах ҫакланап. Акӑ епле уҫӑмлӑ каланӑ кун пирки Петровӑн шалти монологӗнче: «Хӑвна ирӗк парсан, кахалу сана ҫут тӗнче илемӗсемпе астарма тытӑнать. Мӗн кӑна ҫук пулӗ ҫынна илӗртмелли! Хитре хӗрсем, ӗҫкӗ-ҫикӗ, пуш сӑмах ҫаптарса ларни... Хӑвна ху алла илеймерӗн иккен, ӗҫлеме хистеймерӗн — куллен-кунах кӑмӑлу сивӗнсе пырать, ӗҫлес хевтӳ пӗтет. Ун пек чухне ҫын тӗрлӗ сӑлтавсем шыраса ларать — хваттер пӗчӗккӗ-

мĕн, ҫемье пысăк... Чунĕ пĕчĕкки ҫинчен ҫеҫ вăл никама та шарламасть. Художник сÿнет ҫапла». Шăпах ҫавнашкал пулса тухман-и вара Якурпа та. Автор художникăн, искусство ҫыннин, халăх умĕнчи сăваплă та пысăк тивĕҫĕ пирки вырăнлă сăмах хускатнă.

Писатель сăнарĕ «Кĕрхи ҫумăр» повеҫре те тĕпре. Анчах та автор унччен каланă сăмаха тепĕр хут каласран асăрханни, ҫĕнĕ ҫулпа утма тăрăшни лайăх курăнать кунта. Пирĕн прозăра ҫыракан ҫыннăн сăнарне ҫакăн евĕрлĕ сăнлани пулманччĕ-ха. Сахал курнă-и эпир ятлă-сумлă, яланах малта пыракан, пурнăҫри йывăрлăхсене туххăмрах ҫĕнтерсе тухакан писательсен сăнарĕсене. «Кĕрхи ҫумăр» повесть геройĕ Эрне Хĕлипĕ чылай енчен ҫак калăпаларман, урăхларах этем. Чăн малтан ун сăнарĕнче хирĕҫÿллĕ енсем нумайййи тÿрех куҫа тирĕнет. Ĕҫ каймасăр чăлханса ларнă самантсенче вăл таврари ҫынсемпе те, килти ҫывăх мăшăрĕпе те, хăйне хăй те пĕр чĕлхе тупаймасть иккен, ҫĕтĕлме пикенет, вырăн тупаймасăр хăшкăлать. Ҫапла чылайччен асапланать этем сăмах тĕшши шыраса, чун-кăмăл чăлханчăкĕпе кĕрешсе. Уяр ытти писательсенчен малтан илсе кĕрсе кăтартрĕ пире ҫыракан ҫыннăн лабораторине, унăн «хура ĕҫне» те пытармарĕ. Уйрăмах пултарулăх ĕҫĕнче пÿлĕнсе ларнă самантсенче йывăр туять Хĕлип хăйне. Ҫавнашкал «пÿлĕнсе ларнă» тапхăрта вăл Атăл леш енне кану ҫуртне каять. Акă Хĕлип хăйĕн вулаканĕсемпе пĕрле пĕр вăхăт канма тытăнать. Паллаҫҫĕ иккен ăна кунта чылайăшĕ. Ав пĕр хĕрарăм ăна сăнаса, паллакан ҫынна курнă пек пăхса иртет. Чĕрĕ писатель тет-ши? Тен, ҫынсем хушшинче ăнсăртран килсе лекнĕ турă вырăнне хурать? Мĕнпур япалана витĕр курса, пурне те пĕлсе, ҫынсене ăҫта килчĕ унта тăн парса ҫÿрекен этем вырăнне картмасть-ши писателе? Тен, ытти ҫынсенче пур вăйсăр енсене, кăлтăксемпе ҫитменлĕхсене тупасшăн? Вара калĕччĕ: эс те пирĕн пек ҫынах, ытлашши пуҫна ан каҫăрт. Ҫук иккен, ку писательре хăйне пысăка хума тăрăшни, хăйне мăнаҫланса тыткалани пачах та ҫук. Хрестоматилле сăнар картне лармасть темшĕн ку писатель сăн-сăпачĕ, хăйне хăй тыткалани. Пĕр сăмахпа каласан, пур енчен пăхсан та ахаль ҫынах Хĕлип. Унăн «сивĕ кăмăлĕ хÿтĕленмелли маска иккенне Рина килнĕ кунах сисрĕ-ха. Хуппи кăна вăл. Аялта (шалта) ҫав вĕри юнах юхать пулмалла. Хăй сисмен хушăра сăнакаларĕ те ăна Рина — аптрамалла унпа. Иккĕленсе утать, сăнĕ мĕскĕн». Апла пулсан, вăл та пирĕн пек ҫынах, шутлать хĕр.

Эрне Хĕлипĕ икĕ туртăм хушшинче асапланать. Пĕр

енчен, пĕччен, ҫынсенчен уйрăм, хăйпе хăй ҫеҫ куҫа-куҫăн юлас туртăм ку. Ҫав вăхăтрах ҫынсем те илĕртеҫҫĕ ăна, пурнăҫ таппи унта-ҫке-ха. Вăрманти пушара сӳнтерне самантра, кĕтмен ҫĕртен, хăй ҫынсемпе уйрăлми пĕрле пулнине ҫĕнĕрен туйса илет Хĕлип. «Йышпа пĕрле вилме те ҫăмăлрах». Мĕн тери хитре чунлă вĕсем — инкекпе кĕрешме кар тăнă ҫынсем! Харпăр хăйшĕн ăшталанса мар, ҫутҫанталăк илемне, ун пуянлăхне ҫăлассишĕн тухнă вĕсем пĕр ĕмĕт-тĕллевпе. Пирĕн прозăри хăшпĕр произведенисенче чылай чухне пушарсăр ниепле те сюжет йĕрĕ малалла тăсăлмастчĕ. Ҫак тахҫанах кивелнĕ, хытса ларнă схемăран хăпайман авторсем сисмесĕрех хăйсене хăйсем пародилесси патне ҫитсе тухни те, ытти кулăшла самантсем те сахал мар пулнăччĕ пирĕн прозăра. Пушарĕ хăй вара персонажа «паттăра» кăлармалли меслет, унăн хастарлăхне пит ансаттăн, яр-тӳреммĕн кăтартма май паратчĕ. Уяр геройĕ вара ҫакнашкал хăрушла лару-тăрура ҫынсемпе пĕрлешсе, пĕр-пĕр ирĕлскен япала пек, куҫа «курăнми пулать» тейĕн. Нимле чап та, хăй тавра шăв-шав кăларни те кирлĕ мар иккен ăна: пушар сӳнтерес ĕҫе йĕркелесе, хастар ертсе пынăшăн ăна вăрман хуҫалăхĕ укҫа пама йышăнать. Укҫине илмест сăпай ҫын, ыттисенчен нимпе те уйрăммăн палăрман вăл, хăй шухăшĕпе. Теприншĕн ҫакнашкал лару-тăрура шăв-шав кăларса тусан вĕҫтермешкĕн мĕн чухлĕ май тупăннă пулĕччĕ!

Уяр хăйĕн геройне юратура та тĕрĕслесе пăхать. Ашкăнчăк е ҫăмăлттай туйăмсен сукмакĕпе ҫӳреме кăмăллакан этем мар Хĕлип. Ринăна саваканскер, вăл, канăҫа ҫухатса, ҫывăрайми пулать. Хĕрӳ туйăмсен вутĕнче ҫунакан Хĕлип, ниме те пăхмасăрах, Рина хыҫҫăн Атăл урлă каялла каҫать — мĕнле пулсан та унпа тĕл пулмаллах ун. Унтан пĕр тăхтамасăр Ишлее вĕҫтерет, Ринăсен килне. Анчах та тепре тĕл пулма пӳрмен иккен Хĕлипне Ринăна.

Акă ĕнтĕ тинех юратупа пĕрле Хĕлип патне хавхалану та таврăнчĕ, ҫырас кăмăлĕ хĕрсе ҫитрĕ ун. «Чунĕ тулли ун. Пĕве татса кайнă». Анчах та кану ҫуртне каялла, ĕҫ сĕтелĕ хушшине, талпăнакан Хĕлип ăнсăртран шыва кайса вилет. Ҫакнашкал вилĕм повеҫре характер логикипе ҫыхăннă теме йывăр. Автор этем шăпин пĕтĕм кăткăслăхне кăтартас тĕллевпе ҫапла вĕҫленĕ ĕнтĕ хайлавне. Анчах та манăн, вулаканăн, кунпа килĕшес килмест.

Ҫитмĕлмĕш ҫулсен пуҫламăшĕнче Уяр хăйĕн чи лайăх повеҫĕсенчен пĕрне «Аҫта эс, тинĕс?» ятлине пичетлерĕ. Унта кăтартнă ĕҫ-пуҫсем тайгара пулса иртеҫҫĕ. Икĕ ача — пĕри чăваш, тепри эвенк, Амикан, тайгана ним хăрамасăр

çулçӳреве тухаççĕ. Тен, шăпах çакă вăл «хастаррисен ăссăрлăхĕ» (Горький калашле)? Ан тив, пултăр, анчах та илĕртӳллипе хавхалантараканни те, шанчăк кӳрсе кĕрешĕве йыхăраканни те тем чухлех çакнашкал утăмра. Темтепĕр тӳссе ирттерме тивет ачасен, темле кĕтмен инкекпе те куçа-куçăн тăраççĕ вĕсем, анчах парăнмаççĕ. Пурнăçа юратни, тĕнче çине тăп-тăрă куçпа, шанчăкпа пăхни тĕрек парать вĕсене, çавах вилĕмрен те çăлать. Яланхи пекех, автор, критика асăрхаттарнисене шута илсе, повеçе юсарĕ. Ун хыççăн «Дружба народов» журналта вырăсла та пичетленнĕччĕ вăл.

Хăйĕн юлашки çулсенче çырнă хайлавĕсенче Уяр психологизмла çĕнĕлĕхсем шырани, ăсталăхне туптани уççăнах курăнчĕ. Пысăк темăсем, ялхуçалăх е производство аталанăвĕнчи ак халь татса памалли кăткăс ыйтусем курăнсах кайманçĕ пек писатель çырнисенче. Вăл этем чунчĕрин таппине тăнлать, ырăпа усалăн шалти кĕрешĕвне сăнлама тăрăшать, философилле ыйтусем тавра ытларах шухăшлать. Çавăнпа Уяр хайлавĕсенчен чылайăшĕ актуаллă тема шыракан критиксен куçĕ тĕлне пулмасăрах юлчĕç пулмалла хăй вăхăтĕнче. Сăмах май Юрий Скворцов пултарулăхĕ пирки те çаплах калама тивет.

Уяра тивĕçлипех калав ăсти теççĕ. Тарăн шухăшлă калавсенче автор сăнарсен психологине шалтан уçса кăтартать. Сăмаха ытлашши вакламасăр, кĕскен калать. «Çыру», «Пĕр сăмах», «Мăйăр хуппи» тата ыттисене те асăнма пулать. Пĕчĕк хуранăн пătти тутлă текен шухăш пуçа пырса кĕрет вĕсене вуланă хыççăн.

Е тата писатель çырнă очерксене илер. Вĕсенче те хăйне евĕрлĕ илем тĕнчи тыткăнлать вулакана. Ыттисем асăрхаманнине, тӳрех куçа курăнманнине кăтартма тăрăшать очеркист. Очерксен чĕлхи илемлĕ те сăнарлă. Аçта-ăçта кăна çитсе курман-ши Хветĕр Уяр. Юлашки çулсенче çеçха акă Индире, Шри-Ланкара, Венгрире пулса таврăнчĕ. Кашнинчех хитре очерксем парнелерĕ вулакансене. Акă хăшпĕр кĕнекесен ячĕсем: «Яланах çул çинче», «Çулсем-йĕрсем», «Тăван çĕршыв тăрăх», «Чăваш ялĕсем тăрăх», «Çĕпĕрти чăвашсем», «Шупăра, Саян тăвĕсем патĕнче», «Çул кĕнеки» т. ыт. те.

Пысăк писатель яланах чăн-чăн интернационалист. Хăйĕн тăван халăхне хисепе хуман, ун хуйхи-суйхине туйман çын ытти халăхсене те сума сумасть. Хветĕр Уяр çырнисенче, украин поэчĕ Павло Тычина сăмахĕсемпе каласан, «пĕрлĕхлĕ йыш туйăмĕ» туллин тапса тăрать. Максим Горький, Александр Фадеев, Демьян Бедный, Гарин-Михайлов-

ский тата ытти вырăс писателĕсем пирки вăл хитре очерксем сахал мар çырчĕ. Асăннă çыравçăсенчен хăшпĕрисем патша саманинчех пусмăрти чăвашсен хутне кĕрсе пичетре çырнă, патша тарçисен элеклĕ сăмах-юмахне тăрă шыв çине кăларнă. Тăван халăхăмăр ячĕпе тав тăвать вĕсене халь чăваш писателĕ çав пархатарлă ĕçшĕн.

«Шушăра, Саян тăвĕсем патĕнче» очеркне писатель Владимир Ильич Ленин ссылкăра пуранна вырăна çитсе курсан, аслă çулпуçăмăр утса çÿренĕ сукмаксене йĕрлесен, унти сывлăшпа сывланă хыççăн хавхаланса çырнă. «Пĕр кĕнеке çырассишĕн кăна миçе пин километр тумарăм пуль эп»,— тет писатель «Çул йыхравĕ» очеркĕнче. Çав асамлă çул йыхравĕ памасть те ĕнтĕ ăна мăкланса, пĕр вырăнта хытса ларма.

Яланхи пекех çанă таварса, хавхаланса ĕçлет паян та Уяр писатель, кунсем иртнине пăхмасăр. Çĕнĕ калавсемпе очерксем хайлать. Ĕçлеме вăл чăн та васкамасăр ĕçлет, чун хĕрмесĕр (гонораршăн çеç) пĕр йĕрке те çырмасть. Ĕçне яланах тиркевлĕ хаклать, хăйĕнчен хăй çав тери нумай ыйтать. Ĕçтешĕсенчен те — çаплах.

Уяр творчество ĕçĕ пирки çырнисене те вулама кăмăллă, вĕсенче тимлĕ куç паллисем, çĕнĕ сăнавсем сахал мар. «Çакна асăрханă эп. Хăшпĕр писателĕн кĕнекине вулатăн та автор хăйĕн чи çÿлти «тÿпипе» пынине сиссе тăратăн. Унтан çÿлерех, унтан тарăнрах нимĕн те юлман писателĕн. Вăл ку кĕнексне хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне пана. Паллах ĕнтĕ, пур енчен те мар пуль, пĕр енчен çеç пуль. Çав кĕнекене кирлĕ енчен тата пăртак çÿлерех хăпармалла пулас пулсан, авторăн сывлăшĕ пÿлĕнĕччĕ, аяларах анма та пĕвĕ çитмĕччĕ». Тĕрĕс калать писатель, сахал мар пирĕн унашкаллисем те. Уяр кĕнекисем вара пирĕн проза тÿпине палăртаççĕ тенĕ пулăттăм эп. «Чĕлхе ăсти», «психолог», «стилист» теççĕ час-часах Хветĕр Ермиловича хăйĕн ĕçтешĕсем. Ку чăн та çапла. Çамрăк çыравçăсене пулăшас енĕпе те сахал мар ĕçлет писатель, вĕсен алçырăвĕсене вуласа, усăллă сĕнÿсем парать. Вĕрентекене час-часах тĕрлĕрен творчество семинарĕсенче курма пулать, проза секцийĕн ĕçне те хутшăнать вăл. Унăн вырăнлă сăмахне, ырă суннине ăша хывма тăрăшаççĕ çамрăксем. «Федор Ермилович мĕн калĕ», «Уяра вулаттарса пăхсан лайăхчĕ» тенисене тĕрлĕ ÿсĕмри çыравçăсенчен илтме пулать.

Польша писателĕ Ян Парандовский писатель ĕçне вăтам ĕмĕрсенчи алхимиксем нимрен ылтăн тума хăтланса асапланнипе танлаштарать. Çак сăнарлă та витĕмлĕ танлаштару сăпай та ĕçчен, пысăк культурăллă писатель-

коммунист Федор Ермилович Уяр ҫинчен шухӑшланӑ май асӑма килчӗ. Кунҫулӗ те, шӑпи те, кӗнекисем те, хӑй ӳкернӗ сӑнарсем те, килӗнчи пуян библиотеки те — пурте унӑн хӑйне ҫеҫ тивӗҫлӗ майлӑ. Пысӑк ӑстана нихҫан та ремесленникпа арпаштармастӑн. Ремесленник килопа, пӑтпа виҫет таварне е лавпа турттарать. Аста вара пӗрчӗн-пӗрчӗн, тӗпренчӗкӗн шырать. Вӑл чунра шӑрататать-ҫке-ха ылтӑнне.

Кунҫул пӳрнинчен иртеймӗн — кама мӗн панӑ!

*1984*

## ЙЫХАРСАН ИНҪЕТЕ КӖРЕН ПАРАС

Хальхи вӑхӑтра, шкул реформине аплӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑ тапхӑрта, тӑван чӗлхепе тӑван литературӑна вӗрентес ӗҫӗн пӗлтерӗшӗ нихҫанхинчен те пысӑк. Апла пулсан, илемлӗ литература ӑстисен умне самана пысӑк задачӑсем ҫине-ҫинех кӑларса тӑратать. Мӗншӗн тесен чуна парса, пысӑк ӑсталӑхпа вӗрентмелли литература хӑй те пуҫ таймалла пысӑк пулмалла. Шкулпа литература хушшинчи ҫыхӑнусене тачӑлатасси — хальхи пурнӑҫ хистевӗ. Мӗнле сывлать паянхи шкул? Ҫӗнӗ варкӑш сывлӑшӗ хуҫалапма пуҫланӑ-и унта? Вӗренӳ ӗҫне ҫӗнӗлле йӗркелесси мӗнлерех пырать? Тӑван чӗлхепе литературӑна вӗрентесси кирлӗ пек пулса пырать-и? Нумай-нумай ытти ыйтусем те шухӑшлаттарма тивӗҫлӗ ҫыравҫӑсене. Майӗ-мелӗсем те сахал мар вӗсен: сӑнарласа ӳкерсе те, публицистикӑлла ҫивӗч статьясемпе очерксенче те калама пултараҫҫӗ хӑйсене мӗн савӑнтарнипе пӑшӑрхантарнине, чуна ыраттарнине. Тӳрех калас пулать, халлӗхе пирӗн чӑваш ҫыравҫисем ҫителӗклӗ таран *тимлемеҫҫӗ-ха шкул темине*. Ку ӗҫ малашне те ҫаплах пулса пырсан, инерципе кайсан, нацилле чӑваш литературин хевти чакма тытӑнмӗ-ши? Кунта чӑн малтан мана ак мӗн шухӑшлаттарать. Инженерсемпе тухтӑрсем те, экономистсемпе космонавтсем те тата ытти нумай-нумай специалистсем те кирлӗ ҫӗршыва. Анчах та кунпа пӗрлех чӗлхене кӗвӗ-юрӑ ӑстисем те, художниксемпе сӑвӑҫсем те малашне те тухсах пычӑр тӳсӗмлӗ те ӗҫчен чӑваш халӑхӗ хушшинчен. Нумайӑшӗ вӗсенчен паян шкул парти хушшинче лараҫҫӗ-ха, пӗлӳ пухаҫҫӗ. Культурӑпа экономика аталанӑвӗ вӗсенчен килӗ малашне. Илемлӗ, сӑнарлӑ, янравлӑ чӑваш сӑмахӗпе коммунизма пырса кӗрер тенӗччӗ